Павлик. Кама?

Вери. Ген-кă-на! Анчах эсĕ кун çинчен Павлика ни-ни!..

Павлик. Аплантăм. Эпĕ Павлика ни-ни!

Вери. Ну, эпĕ вĕçтерем-ха.

Павлик. Вĕçтер, Вери, вĕçтер. Генка сана кĕтет те пуль. *(Шăлаварне тăхăнать.)*

Лиди *(алăка шаккаса)*. Уç-ха часрах, Павлик!

Павлик *(алăка уçса)*. Мĕн пулчĕ, Лиди? Эсĕ темшĕн питĕ пăлханса ӳкнĕ?

Лиди. Каçар, Павлик, театра пыраймастăп эпĕ.

Павлик. Мĕншĕн? Мĕскер пулчĕ санпа, Лиди?

Лиди *(пусăрăннă сасăпа)*. Стройкăран прораб шăнкăравларĕ. Каçхи сменăра манпа ылмашăнса ĕçлекен Маша сасартăк чирлесе ӳкнĕ, крансăр пĕтĕм бригада ĕçĕ чарăнса ларать. Ну, эпĕ килĕшрĕм вара...

Павлик *(савăнса)*. Чим-ха, пăх-ха эсĕ ман çинелле. *(Хĕр пуçне тытса çĕклет.)* Эсĕ хăвна ман умра айăплă туймастăн-и?

Лиди. Айăплă çав — театра та каяймастпăр ав. Эс пĕчченех кай. Эп часрах стройкăна тухса чупатăп.

Павлик *(хĕре тытса хăй тавра çавăрать)*. Маттур, Лиди! Театрне эпир тепĕр чухне кайса курăпăр. Тĕрĕс, кĕçĕр бригадăна пулăшмалла. Эпĕ те сансăр ниçта та каймастăп...

Лиди. Чăнах-и? Çилленместĕн-и?

Павлик. Эх, эсĕ, комсомолка! Шутла-ха: ударлă комсомолла стройка штабĕн членĕ коммунизмла ĕç бригадин крановщицине çавнашкал ырă ĕçшĕн ăçтан-ха çилленме пултартăр?.. Çук! Нихçан та! Эпĕ хам та санпа пĕрле стройкăна пыратăп, Лиди. Комсомол обкомне яма отчет çырса пĕтерейменччĕ, кантура çитсе çавна вĕçлетĕп... Билечĕсене вара Генкăна парăп. Кайса курччăр Верипеле иккĕшĕ. Вĕсем вĕт...

Лиди. Эх, çапах та кĕçĕр театра хамăнах каяс килетчĕ... Эсĕ мана кĕçĕр пĕтĕмпех, пĕтĕмпех каласа парăп терĕн вĕт-ха. Пĕлетĕн-и, питĕ кĕтнĕччĕ эпĕ паянхи куна...

Павлик. Лиди! *(Лидие чуптума тăрать, хĕр хирĕçлемест, анчах çав вăхăтра алăка шаккани илтĕнсе каять. Павликпа Лиди пĕр-пĕринчен уйрăлса тăраççĕ. Пӳлĕме хаваслă Вери вирхĕнсе кĕрет).*

Вери. Лиди! Генка Пахом Пахомычпа калаçса пăхап, терĕ!.. *(Чечек хыçĕнче тăракан Павлика асăрхать те малалла ним калама аптăрать.)*

Лиди *(куларах)*. Вери?..

Павлик *(чечек хыçĕнчен тухса, паçăрхилле Лиди сассипе)*. Виçĕ эрне те виçĕ кун уш!..

Вери *(аллипе питне хупласа)*. Ай, пĕтрĕм! *(Вирхĕнсе тухса каять.)*

Чаршав.

*(Малалли пулать.)*

---

*Чăвашсен çĕнĕ çырулăхĕ пуçланнăранпа 100 çул çитнĕ май*

# ЧĂВАШ ÇЫРУЛĂХĔН АСЛĂ ОКТЯБРЬ РЕВОЛЮЦИЙĔЧЧЕНХИ УТĂМĔСЕМ

Пирĕн Тăван çĕршыв — тĕнчери нумай нациллĕ чи пысăк çĕршыв. Халĕ кунта Аслă Октябрь революци тивлечĕпе ирĕке тухнă, нихăçан арканми туслă Союза пĕрлешнĕ 130 чĕлхеллĕ халăх пурăнать. Халăхсен çак пĕрлĕхлĕ Союзне тунăранпа 1972 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче шăпах 50 çул çитет. Пирĕн çĕршывра пур нацисем те пĕр тан праваллă, вĕсен пурнăçĕ те пĕр пĕтĕм социализмлă никĕс çинче аталанса, йĕркеленсе пырать. Пурнăç интересĕсем пĕр пек пулни, пурте пĕр аслă тĕллев тытса коммунизм патне пыни хамăр çĕршыври пур халăхсен ăс-тăнĕнче те пĕрешкел палăрăмсем çуратать. Çакна май кашни халăх хăйĕн формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă литературипе искусствине аталантарма пултарать.

Чĕлхе — нацин тĕп паллисенчен пĕри тата унăн чи пысăк пуянлăхĕ. Вăлах çынсене пĕр-пĕринпе хутшăнма, ăнланма пулăшакан тата наци çырулăхне пултармалли чи кирлĕ хатĕр. Çырулăхăн наци культуринчи пĕлтерĕшĕ питех те пысăк: кунçулĕ унăн халăх пурнăçĕпе культурин ӳсĕмне кăтартакан куçкĕски евĕрлĕ.

Наукăра «çырулăх» тесе халăх чĕлхин хăйне тивĕç паллисене шута илсе тунă, çынсене пĕр-пĕринпе хутшăнма пулăшакан тĕрлĕ мелĕсене пĕтĕмлетсе калаççĕ. Апла пулсан, кашни халăх çырулăхĕн пикĕсĕнче çав чĕлхен хăйевĕрлĕхне палăртса тăракан графикăпа орфографи системи пулмалла.

Аслă Октябрь революцийĕччен Россия империйĕнчи 17 тĕрлĕ халăхăн çеç хăйне ятăн çырулăх пулнă. Патша

хăшпĕр категорийĕсене вырăс чĕлхинчи категорисемпе пăтраштарнă тĕслĕхсем те пур. Сăмахран, В. П. Вишневский чăваш чĕлхинче те, вырăс чĕлхинчи пекех, виçĕ тĕрлĕ вĕçленӳ тата ултă падеж форми пур тесе вĕрентнĕ. Çавăн пекех камăнлăх категорийĕн 1-мĕш сăпат аффиксĕ япала ячĕсене вăл (тĕсл.: *ачам, хĕрĕм, посим, орам* т. ыт. те) чĕнӳ (звательный) падеж аффиксĕ тесе шутланă.

Чăваш чĕлхи иккĕмĕш грамматикинчи теори йăнăшĕсене хăй вăхăтĕнче вырăс ученăйĕсем Г. С. Суровцов, В. А. Сбоев, Н. И. Золотницкий, Н. И. Ашмарин тĕпĕлĕн тишкерсе тухнă, кĕнекене тивĕçлĕ хак панă.

«Начертания правил чувашского языка» кĕнекен чăваш чĕлхи вĕрентĕвĕнчи пĕлтерĕшĕ пысăк. Унăн авторĕ пирĕн тăван чĕлхе çинчен пĕтĕм Европăна илтĕнмелле ырă сăмах каланă: унпа Европăри чылай вăйлă аталаннă çырулăхлă çĕршывсенчи тĕпчевçĕсем те усă курнă. Паллă нимĕç чĕлхеçи Вильгельм Шотт çак грамматикăпа паллашнă хыççăн «Исследование по чувашскому языку» ятлă тĕпчев ĕçĕ çырнă, ăна 1842 çулта Берлинта латин чĕлхипе пичетлесе кăларнă. Хальхи тĕпчевçĕсем Шоттăн çак ĕçне чăваш чĕлхин истори грамматики тесе калаççĕ. Унта вăл чăваш чĕлхинчи хăшпĕр сасăсен, формăсен историллĕ аталанăвне кăтартса панă. Тĕслĕхрен, вăл чăваш чĕлхинчи *р* сасă тĕрĕк чĕлхинчи *з* сасăпа *(саккăр—сикез)*, *л* сасă — *ш* сасăпа *(кĕмĕл—кĕмĕш)*, пуçламăш сыпăкра *ç* сасă — *й* сасăпа *(çумăр—йăмăр)*, сăмах вĕçĕнчи *ç* сасă — *ш* сасăпа *(пуç—баш)* ылмашнине палăртнă.

Иккĕмĕш грамматика материалĕпе усă курса, венгр, финн тĕпчевçисем А. Регули, И. Буденц, В. Мункачи, А. Альквист, М. Кастрен чăваш чĕлхипе паллашнă. Российăра чылай вăхăт ĕçлесе пурăннă, Чĕмпĕр гимназийĕнче латин чĕлхи вĕрентнĕ Андрей Дешко венгр та, çак гармматикăпа усă курса, 1855 çулта венгр, чăваш, мари чĕлхисен танлаштаруллă грамматикине çырса кăларать, унта вăл хальхи венгр чĕлхинче 17 чăваш сăмахĕ упраннине палăртать.

Çак кĕнекере çитменлĕхсем те пулнă-ха. 1855 çултах «Современник» журналта вырăссен паллă революционер-демократĕн Н. Г. Чернышевскин А. Дешкон «Венгерская грамматика с русским текстом в сравнении с чувашским и черемисским языками» кĕнеки пирки çырнă рецензийĕ пичетленсе тухнă. Унта аслă критик авторĕн тĕпчев принципĕ йăнăш пулнине палăртнă, унăн националистла шухăшне тӳрлетнĕ. Чăваш çырулăхĕн малтанхи тапхăрĕ тата акă мĕнпе паллă: XIX ĕмĕрĕн 50—60-мĕш çулĕсенче паллă чăваш писателĕ тата историкĕ С. М. Михайлов (1821—1861) ĕçленĕ. Вăл, вырăс саспаллийĕсемпе пулин те, халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене илемлĕ чăваш чĕлхипех çырма пултарнă. 1853 çулта унăн «Чувашские разговоры и сказки» кĕнеки Хусанта уйрăм кĕнекен пичетленсе тухнă. Ку вăл чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене пухса кăларнă пĕрремĕш кĕнеке, тăван литературăн малтанхи чечек çыххи шутланать. Чăваш чĕлхине тĕпчес тĕлĕшпе уйрăмах венгр тĕпчевçисем нумай пархатарлă ĕç тунă, халĕ те тăваççĕ. 1862—1863 çулсенче И. Буденц венгр, чăваш чĕлхине тĕпчесе, виçĕ пайлă пысăк очерк çырса кăларнă. Ана чăваш чĕлхин тĕплĕ çырнă малтанхи наука грамматики тесен те йăнăш пулас çук, мĕншĕн тесен чăваш чĕлхин хăшпĕр грамматика категорийĕсене çĕнĕлле, уçăмлă, халăх чĕлхинчен илнĕ тĕслĕхсемпе çирĕплетсе çырса кăтартнă, чăваш чĕлхин хăй евĕрлĕ енĕсене чылай палăртма пултарнă. Унта вăл, тĕпрен илсен, 1843—1846 çулсенче чăваш çĕршывне килнĕ А. Регули тĕпчевçĕ-çулçӳревçĕ пухнă материалсемпе тата вырăсларан чăвашла куçарнă тĕн кĕнекисемпе анлăн усă курнă. Анчах Н. И. Ашмаринччен чăваш чĕлхин çак палăкĕ çинчен никам та пĕлмен.

Н. И. Золотницкий (1829—1880) — чăваш çырулăхĕн малтанхи тапхăрĕнчи чи паллă деятель. Çак пултаруллă педагог-тĕпчевçĕ 8 çула яхăн (1867—1875) Хусан кĕпĕрнинчи чăваш шкулĕсене тĕрĕслесе тăракан инспекторта ĕçленĕ, чăваш чĕлхине тĕпченĕ. Вăл 1829 çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнче хальхи Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Урхас Кушкă ялĕнче вырăс священникĕн çемйинче çуралнă. Куккăшĕ, В. А. Сбоев профессор, хĕтĕртнипе духовнăй семинарире вĕренме пăрахсах 1847 çулта Хусан университечĕн историпе филологи факультетне вĕренме кĕнĕ. Вĕренсе тухсан, чылай вăхăт хушши Вятка хулинчи Патшалăх пурлăхĕн палатинче ĕçленĕ. 1860 çултан пуçласа 1866 çулччен «Вятские губернские ведомости» хаçата редакцилесе тăнă, çутĕç ыйтăвĕсемпе статьясем пичетленĕ, кĕпĕрнери мари, удмурт халăхĕсен чĕлхине тĕпченĕ. 1861 çулта кĕпĕрне хаçачĕн 47-мĕш номерĕнче унăн «По поводу открытия частных школ в Вятской губернии» статйи пичетленнĕ. Унта вăл вырăс мар халăх ачисене тăван чĕлхепе вулама, çырма тата шутлама вĕрентмелле, пуçламăш вĕренӳ кĕнекисене тăван чĕлхепе çырса кăлармалла, аслă классенче çеç вырăсла вĕрентмелле тесе çырнă.

1866 çулта Н. И. Золотницкий Хусана ĕçлеме куçать, вăл кунта Н. И. Ильминскипе çывăх паллашать. Вĕсем иккĕшĕ те Атăлçи халăхĕсене хутла вĕрентме кӳлĕнеççĕ. Çак çĕнĕ шухăш çав вăхăтри влаçра тăракан хăшпĕр чиновниксемпе священниксене килĕшмен: вĕсем Атăлçи халăхĕсене хăйсен тăван чĕлхипе вĕрентес идейăна хирĕç тăнă. 1866 çулта çак тавлашăва татса парас тĕллевпе Хусанта ятарласа комисси йĕркеленĕ. Унăн йышне П. Д. Шестакова, Н. И. Ильминские, Н. И. Золотницкие тата паллă тюрколога Е. А. Малова кĕртнĕ. Комисси, пĕр шухăшлă пулса, вырăс мар халăхсен прихучĕсенчи чиркӳсемпе шкулсенче тăван чĕлхепе кĕлĕ вулама, вĕрентме ирĕк памалли çинчен проект çырса хатĕрленĕ. Проектри сĕнӳсене темиçе çул хушши чăваш шкулĕсемпе чиркĕвĕсенче те сăнанă. Çак тапхăрта 1867 çулта Н. И. Золотницкий Хусан университечĕн типографийĕнче «Чуваш кнеге» ятпа çĕнĕ букварь пичетлесе кăларать. Çав çулах унăн чăвашсем валли хатĕрленĕ малтанхи календарь «Солдалык кнеге» ятпа çапăнса тухать. Çак кĕнекене, тĕн йăли-йĕркипе çыхăннă статьясемсĕр пуçне, вырăс халăх историйĕнчен илнĕ событисем çинчен чăвашла çырнă материалсем те кĕнĕ. Сăмахран, календарьте вырăссем тутар ханĕсемпе çапăçни çинчен, Полтава патĕнчи çапăçу, Мининпа Пожарский çинчен каласа панисем пур.

Н. И. Золотницкин ĕçĕ, малтанхи миссионерсен ĕçĕсемпе танлаштарсан, чылай пархатарлă. Вăл чăваш чĕлхи алфавитне хăшпĕр улшăнусем кĕртнĕ: чăваш чĕлхинчи сасăсен хăйевĕрлĕхне палăртас тесе, малтанхи миссионерсем тунă хăшпĕр саспаллисене урăх çĕнĕ саспаллисемпе улăштарнă, хăшĕсене пачах кăларса пăрахнă. Юсаса çĕнетнĕ хыççăн вăл чăваш чĕлхи алфавитĕнче 34 саспалли хăварнă: *а, я, э, е, ы, и,* î, *йи, о,* ŏ, *йо, у, ӳ, ю, й, ь, п, б, в, з, т, д, ш, ж, к, г, х, г, в, р, л, н, м, ч.* Калас пулать: хальхи чăваш алфавитĕнчи *ӳ* саспалли Н. И. Золотницкий алфавитĕнчен юлнă.

Н. И. Золотницкин чăваш халăхне вĕрентес, чăваш чĕлхине тĕпчес ĕçри пĕлтерĕшĕ пысăк. Вăл чăваш грамматикин нумай ыйтăвĕсене тĕпченĕ. 1871 çулта унăн «Заметки для ознакомления с чувашским наречием» кĕнекин сасăсем çинчен вĕрентекен пайĕ пичетленсе тухнă. 1875 çулта тухнă «Корневой чувашско-русский словарь, сравненный с языками и наречиями разных народов тюркского, финского и других племен» кĕнеки паян кун та хăйĕн хакĕпе пĕлтерĕшне çухатман-ха. Ана чăваш чĕлхин кĕске этимологи словарĕ теççĕ. Н. И. Золотницкие чăваш чĕлхе наукин никĕсне хывакан тетпĕр. Ку чăнах та çапла: унччен никам та пирĕн тăван чĕлхемĕре чăн-чăн чĕлхе вырăнне хурса тĕпчекен пулман. Тĕп кĕнекисен малтанхи куçарăвĕсене тишкерне май, вăл чăваш чĕлхе вĕрентĕвĕнче малтанхи хут синтаксис ыйтăвĕсене хускатнă. Малтанхи тăлмачă-

парса тăма пултарнине те И. Я. Яковлевпа унăн сотрудникĕсем асрах тытнă.

И. Я. Яковлев — чăваш çырулăхĕпе литература чĕлхин никĕсне хываканĕ. Унăн çак пархатарлă пысăк ĕçе йĕркелесе ямалли идейисемпе принципĕсем тĕрĕс пулнине халĕ куçкĕретех куратпăр.

Литература чĕлхин нормисене тăвас тĕллевпе И. Я. Яковлевпа унăн сотрудникĕсем халăх чĕлхине, халăхăн сăмах вĕççĕн çÿрекен произведенийĕсене тĕпе хурса ĕçленĕ. Шкулсем валли букварьсем кăларни те, ялхуçалăх, медицина, истори ыйтăвĕсемпе чăвашла кусарнă кĕнекесем пичетлени те литература чĕлхин вичисене нормăлама чылай пулăшнă.

1808 çулхи майăн 15-мĕшĕнче И. Я. Яковлев «Чăваш халăх кĕввисемпе тексчĕсем» ятпа чăваш халăх юррисен пĕрремĕш кĕнекине хатĕрлесе пичете панă. Çав çулах, октябрь уйăхĕнче, чăваш илемлĕ литературин пĕрремĕш антологийĕ «Чăваш юмахĕсемпе халапĕсем» ятпа пичетленсе тухнă. Çак кĕнекере ĕнтĕ К. Ивановăн вилĕмсĕр «Нарспи» поэми, «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм», «Икĕ хĕр» юмахĕсем, Н. Шупуççыннин «Янтрак Янтравĕ» поэми, «Аслă суеçĕ», «Хитре Чĕкеç», «Вĕри çĕлен» юмахĕсем, М. Федоровăн 29 çул хушши алăран-алла çÿренĕ «Арçури» баллади кун çути курнă. Çак кĕнеке вăл тăван чĕлхемĕр ăстисем илемлетсе çырнă произведенисен пĕрремĕш пуххийĕ, чăн-чăн илемлĕ чăваш литература произведенийĕсен пĕрремĕш чечек çыххийĕ шутланать. 1912 çулта Чĕмпĕрте «Чăваш халăх кĕввисемпе тексчĕсен» иккĕмĕш кĕнеки пичетленсе тухнă. Кĕнекери юрăсене композитор пулас ĕмĕтлĕ П. Пазухин учитель тĕрлĕ уессенче пухнă.

XIX ĕмĕр вĕçĕнче чăваш чĕлхине чăн-чăн наука меслечĕсемпех тĕпчеме тытăнни çырулăхăмăра тата çÿллĕрех пусăма çĕкленме пулăшнă. Ку тĕлĕшпе Н. И. Ашмарин профессор уйрăмах мухтава тивĕçлĕ ĕç тунă. Унăн наукăллă ĕçĕсем паян куна та кивелмеççĕ, чăваш чĕлхи вĕрентĕвĕн чаплă произведенийĕсем шутланаççĕ.

Çĕнĕ çул хывасси — чи йывăр ĕç. Анчах пĕр пуçласан, вăл вара пĕр çыннăн çеç мар, пĕтĕм халăхăн çулĕ пулса тăрать. Çавăнпа эпир малашлăх çулĕшĕн тар тăкнă, хăйсен мĕнпур пултарулăхĕпе ăсталăхне тата вăйхалне тăван çырулăх ÿсĕмĕшĕн, паянхи илемлĕ литературăпа унăн чĕлхишĕн панă малтанхи çынсене — С. М. Михайлова, Н. И. Золотницкие, И. Я. Яковлева, К. В. Иванова, Н. И. Ашмарина, Н. В. Никольские т. ыт. те тав сăмахĕ калама тивĕç.

Куртăмăр ĕнтĕ, тăван çырулăхăмăр Аслă Октябрь революцийĕччĕнхи çул-йĕрĕ тикĕс пулман: вăл патша пусмăрĕ айĕнче пит вăраххăн, имшеррĕн аталанса пынă. Этемлĕх тивĕçне маннă патша чиновникĕсемпе çыравçисем чăваш халăхĕн шухăш-ĕмĕтне, чунне-кăмăлне ним вырăнне хумасăр хăртни, питлени тăван çырулăхăмăра аталанма çав тери чăрмантарнă. Тÿрех калар: «Чăваш чĕлхи чухăн, унран мĕн усси пур, вăл никама та кирлĕ мар!» — тесе каланисем халăхăмăра кÿрентернех ĕнтĕ, тарăхтарнах. Пĕр-ик тĕслĕх кăна илер: 1903 çулта Етĕрне земствин пухăвĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата агрономипе санитари ыйтăвĕсемпе чăвашла тата марилле брошюрăсем кăларма йышăннă. Çакăн çинчен пĕлсен, Хусан кĕпĕрнинчи земство управин председателĕ Н. Мельников сехĕрленсех ÿкнĕ. «Казанские губернские ведомости» хаçатра вăл «Инородецсен чĕлхисемпе кĕнекесем кăларас ыйту пирки» статья пичетленĕ. Унта вăл пĕр именсе тăмасăр çиллĕн çапла каланă: «Чăвашла кĕнекесем сепаратизмпа мăнкăмăллăх туйăмне кăна ÿстереççĕ, ку вара кăмăла килмест çеç мар, сиенлĕ те... Чăваш культури пулман, пулас та çук»,—тенĕ.

Патша самани чăваша куç уçма та, сăмах чĕнме те паман, ăна тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшлĕхре тытни уншăн усăллăрах пулнă. Унран, унăн çырулăхĕнчен пĕр вĕçĕмсĕр кулнă, ăна йĕрĕнчĕк халăх пек кăтартма тăрăшнă. «Живописная Россия» журналăн 1901 çулхи пĕр кăларăмĕнче В. Н. Майнов журналистăн «Вăтам Атăл тăрăхĕнчи инородецсем» очеркĕ пичетленсе тухнă. Унта çав элекçĕ чăваш халăхĕпе унăн чĕлхи çинчен пĕр ырă сăмах та каламан, унăн нишлĕ пурнăçĕнчен мăшкăлласа, темĕн те пĕр çырса тултарнă. В. Н. Майнов юриех чăвашсене çав тери мĕскĕн, ăс-тăн тĕлĕшĕнчен катăк, кахал та тирпейсĕр пек кăтартма тăрăшнă. Сахал пулнă-и Мельниковпа Майнов пек элекçĕсем тĕнчере?!

И. Я. Яковлев хăй те 50 çул хушшинче пайтах тĕрлĕ элек, тиркев тÿснĕ: йывăр пулнă ăна чăваш халăх культурине малалла аталантарма. Тÿре-шара вак халăхсене ирĕксĕрлесех вырăслатас политикăна тытса пынă. Çав политикăран кăшт пăрăнсанах, çын патша хÿрешкисем умĕнче шанчăксăра тухнă. Çакă Хусан архиепископĕ Палладий сăмахĕсенчен те лайăх курăнать: «Сирĕн пĕри апла, тепри капла тăвасшăн. Ав, Яковлев чăвашлатасшăн, анчах чăвашсене вырăслатас пулать. Тур пĕлет халĕ Руçра мĕн хăтланпине. Грузинсем, осетинсем, тутарсем пурте вĕренесшĕн, кашниех тата — хăйĕнле. Вырăсла вĕрентес пулать!» — хушнă учительсене архиепископ.

Пĕррехинче Çутĕç министерстви И. Я. Яковлева Петербургри канашлăва эксперт вырăнне чĕнсе илнĕ. Унта пĕр каппайчăк сановник чăвашсенчен тăрăхлама пăхнă: «Чăваш чĕлхипе мĕнех калама пулĕ-ши? Чăвашсен кирлĕ сăмахсем те çук-тăр?» — тенĕ вăл. И. Я. Яковлев çак çăмăлçах умĕнче парăмра юлман. Вăл ăна çийĕнчех çапла таварса хунă: «Эхер те, ваше высокопревосходительство, çыннăн шухăшĕ те, туйăмĕ те çук пулсан, ăнкарулăх та çитмесен, вăл пуян чĕлхепе те ăслă сăмах калаймĕ...» — тенĕ.

Аслă Октябрь революцийĕ хыççăн тăван çырулăхăмăрăн çĕнĕ самани пуçланнă. Чăваш халăхне автономи пани, шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентни, чăвашла кĕнеке, хаçат-журнал кăларас ĕç анлăн сарăлса кайни, писательсен Союзне тата ытти творчество организацийĕсене йĕркелени пирĕн тăван çырулăхăмăра çĕнĕ хăват хушса, малалла аталантарса ячĕ. Паян вăл аслă И. Я. Яковлев çĕр çул ĕлĕкрех хывнă çирĕп никĕс çинче аталанса пырать.

Чăваш чĕлхи — автономиллĕ Чăваш республикин чĕлхи. Совет саманинче унăн обществăри пĕлтерĕшĕ те пысăкланчĕ: вăл литературăпа искусство, хаçат-журнал, радиопа телевидени чĕлхи таран ÿсрĕ, унăн тĕрлĕ стилĕсем аталанса кайрĕç. Халĕ халăхăмăр хăй тăван чĕлхипех марксизм-ленинизм классикĕсен, вырăс тата ытти халăхсен литература классикĕсен произведенийĕсене вулать.

Енчен 1871—1917 çулсенче И. Я. Яковлевпа унăн сотрудникĕсем тăрăшнипе Хусанта тата Чĕмпĕрте чăвашла 700 яхăн кĕнеке çеç кăларнă пулсан, халĕ Чăваш кĕнеке издательстви çулсеренех 200 ытла çĕнĕ кĕнеке пичетлесе кăларать. Вĕсен тиражĕ 283 пинрен те иртет.

Чăваш халăхĕн наукăпа культурăри ÿсĕмĕ те пысăк. Республикăри аслă шкулсемпе тĕпчев институчĕсенче чăвашран тухнă наука кандидачĕсемпе докторĕсен йышлă çарĕ ĕçлет.

Шупашкарти икĕ аслă шкул — Чăваш патшалăх университечĕпе Чăваш патшалăх педагогика институчĕ — И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем иккĕшĕ те тăван халăха çутта кăларасшăн, унăн пуласлăхĕшĕн ырми-канми ĕçленĕ çынсем.

Çĕр çул... Çĕнĕ çырулăхăн мухтавлă пĕр ĕмĕрĕ. Паян эпир ăна пуçарса яраканĕ — И. Я. Яковлев умĕнче пуç таятпăр, унăн, В. И. Ленин калашле, «чăваш халăхĕн наци ÿсĕмĕшĕн тунă» пархатарлă ĕçне сума суса мухтав юрри юрлатпăр.

*А. АЛЕКСЕЕВ,*
*Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Наукăпа тĕпчев институчĕн наука сотрудникĕ.*